# ТĔРĔ

*Л. Пушкай*

Тĕрлерĕ тĕрĕ чăваш хĕрĕ
Шап-шурă катанпир çине.
«Малтан хĕвел çĕклентĕр, — терĕ, —
Çутаттăр ирĕк тĕнчепе».

Ак, Туслăх паллине тĕрлерĕ —
Унран хăватлă туслăх çук:
Кĕрешӳре ялан çĕнтернĕ
Ĕçчен çурла та мăлатук.

Пучахсенчен тĕрлерĕ кăшăл,
Хăмачпала çавра-çавра.
Этемлĕх çирĕп çыхăнушăн
Хывать таса çул çĕр тавра.

Çӳлте вырнаçрĕ çутă çăлтăр —
Ялан вăл çиçтĕр йăлкăшса.
Çĕршыв палли хĕвел пек тăтăр
Çынна телейлĕх кăтартса.

Куç умĕнче вылярĕ тĕрĕ,
Çĕклерĕ çамрăк чĕрене.
Çапла тĕрлерĕ чăваш хĕрĕ
Çĕршыв Гербне шур пир çине.

*Пушкай, Л. Тĕрĕ : [сăвă] / Л. Пушкай // Кунçул каçалăкĕ. – Шупашкар, 1987. – С. 112-113.*